Çуллахи каникул

# Ĕç те, кану та тивĕçлĕ шайра пулĕç

***Çуллахи каникулăн пĕрремĕш кунĕ Ачасене хÿтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кунпа пĕр килни питĕ лайăх пулăм. Çак кунран тытăнса тепĕр виçĕ уйăх ашшĕ-амăшĕ ытти чухнехинчен ытларах хÿтĕлеме тивĕç те хăйсен ачисене. Сиенлĕ йăласенчен, эрех-сăра серепинчен, вăхăта усăсăр ирттерессинчен... – урамра тÿрĕ çултан часах пăрăнса кайма пулать. Çавăнпах ашшĕ-амăшĕсем çуллахи каникул вăхăтĕнче ачисене шкулта йĕркелекен лагерьсене çÿреттерме тăрăшнине ырламалла çеç.***

***Кăçалхи пиллĕкмĕш ĕç чĕрĕкне епле ирттересси çинчен вара тĕплĕнрех пĕлес тесе район администрацийĕн вĕрентÿ пайĕн специалисчĕпе А.Н. ДАНИЛОВАПА тĕл пултăмăр.***

**– Алина Николаевна, районти шкулсем çуллахи вăхăтра ачасене йышăнма хатĕр-и?**

– Шкулсем ачасене йышăнма хатĕр. Паян-ыран районти 26 шкул хатĕрленĕ документсемпе Çĕнĕ Шупашкарти «Роспотребнадзортан» пĕтĕмлетÿсем килмелле. Шкулсем малтанхи 10 кунлăха палăртнă менюсемпе заключенисем илнĕ ĕнтĕ. Халĕ апат-çимĕç туянаççĕ. Лагерьсенче 1-мĕш смена июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçланать. Июль уйăхĕнче 2-мĕш, август уйăхĕнче 3-мĕш сменăсем ĕçлемелле.

**– Çуллахи вăхăтра пурĕ миçе ача шкулти лагерьсене çÿрĕ?**

– Шкул çумĕнчи сывлăха çирĕплетмелли лагерьсене пурĕ 770 ача çыраннă, ĕçпе кану лагерĕсене – 443, профиль лагерĕсене – 214. Профиль лагерĕсенче ачасем тĕпчев ĕçĕсене хутшăнса хăйсен тавракурăмне анлăлатаççĕ, вăл е ку енĕпе пĕлÿ шайне те ÿстереççĕ. Çавăнпа та тепĕр 163 ача çÿремелĕх профиль лагерĕсенче хушма сменăсем уçма палăртнă. Укçа-тенкĕ енчен ку ыйтăва татса панă ĕнтĕ.

Районти тепĕр 461 ача çуллахи вăхăтра ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă ĕçлеме килĕшÿ тунă. Çапла вара шкул ачисен 50 проценчĕ каникул вăхăтĕнче хăйсен вăхăтне мĕнле ирттересси паллă.

**– Профиль лагерĕсем пирки пĕлтĕмĕр. Ытти лагерьсен мĕнле уйрăмлăхсем?**

– Ĕçпе кану лагерĕсене тата профиль лагерĕсене çÿрекенсене апатлантарма вырăнти бюджетран укçа куçарнă. Ачасем шкул пахчисенче ĕçлĕç. Ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă ĕçлекенсем те алă усса лармĕç. Вырăнти ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе тата ял хуçалăхĕсен ертÿçисемпе ачасене ĕçе явăçтарасси пирки калаçнă. Çум çумласа, таврана тирпейилем кĕртсе шкул ачисем пысăк усă параççĕ. Çавăнпа та пуçлăхсемпе ертÿçĕсене те активлăрах пулма сĕнетпĕр. Эпир вĕсенчен заявкăсем йышăнса ачасен ĕçпе кану йĕркине çирĕплететпĕр.

Шкул çумĕнчи сывлăха çирĕплетмелли лагерьсенче вара ачасене апатлантарасси социаллă страховани фончĕ куçарса панă укçа-тенкĕпе пулса пырать. Çавăнпа та каласа хăвармалла, çак лагерьсене ĕçлекен ашшĕ-амăшĕсен ачисем кăна çÿреме пултараççĕ. Кунне пĕр ачана 50 тенкĕлĕх çитереççĕ кунта.

**– Ытти лагерьсене камсене çÿреттерме тăрăшатăр?**

– Çуллахи вăхăтра шкулсем çумĕнче йĕркеленĕ лагерьсене чи малтанах йывăр лару-тăрулла çемьесенчи, ашшĕне е амăшне çухатнă ачасене çÿреттерме палăртнă. Çавăн пекех нумай ачаллă çемьесене те, сахал тупăшлă çемьесене те айккинче хăвармастпăр. Инвалид ачасем те лагерьсене çÿрĕç. Çаксем çинче тимлĕх ытларах пулĕ.

**– Ĕçленисĕр пуçне, паллах, активлă кану вăхăчĕ те пулмалла. Мĕнле мероприятисем ирттерессине планланă?**

– Мероприятисен планĕсем хатĕр ĕнтĕ. Лагерьсенче кашни кунах тĕрлĕ мероприятисем иртĕç. Кунсăр пуçне çак вăхăтра район тата республика шайĕнчи тĕрлĕ конкурссене хутшăнма хатĕрленетпĕр. Массăллă информаци хатĕрĕсенче лагерь пурнăçне çутатса паракан «Ылтăн калем – 2009», шкул лесничествисен, таврана тирпей-илем кĕртессипе тата ытти нумай конкурссене хутшăнăпăр. Ачасем каникул вăхăтне усăллă та интереслĕ ирттернине вара вĕрентÿ пайĕ тĕрĕслесех тăрĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА калаçнă.**

Ялти ятлă çынсем

# Шăпа хуçисем – ĕçченлĕхпе чăтăмлăх



«Вăрçă вăхăтĕнче эпир çимен курăк та юлман пуль. Курăк шÿрпи вĕреттĕмĕрччĕ. Пĕрмай ĕне сĕчĕ ĕçнĕрен питсем те кăвак сăнлăрахчĕ. Тырă çитместчĕ. Çынсенчен пĕр пăт тырă илеттĕмĕр те кайран кĕр енĕпе пăт çурă каялла тавăрса параттăмăр», – çапла аса илет паян хăйĕн çамрăклăхне Чуманкасси ялĕнче пурăнакан Елена Михайловна Иванова.

Торинкассинче çуралса ÿснĕ вăл. Çемьери сакăр ачаран вăл кĕçĕнни пулнă. Пысăк йышра ĕçĕ те туллиех. Анчах шкулта вĕреннĕ вăхăтра пĕр кун та уроксенчен юлман хастар хĕр ача.

Ашшĕ 1934 çулта çĕре кĕрет. Пĕтĕм ĕçĕ, хуйхи-суйхи амăшĕн хулпуççийĕсем çине тиенет. Пурнăç татах йывăрланать. Малашлăх пирки çирĕп шухăшланипех пулĕ, Елена 10 класс вĕренсе пĕтеретех. Укçа тÿлесе вĕренме тивнĕ пулин те. «Çулталăкне 150 тенкĕ тÿлемеллеччĕ», – тет вăл.

Шкултан вĕренсе тухсан Елена Михайловна пуçламăш класри ачасене вĕрентме тытăнать. Вăл вăхăтра учительсем çитмен, пурте вăрçа тухса кайнă. Икĕ çул çамрăк хĕр Ятман шкулĕнче ачасене пĕлÿ парас ĕçре тăрăшать. Вăрçă пĕтсен вара малтан кунта ĕçленĕ учительсем те яла таврăнаççĕ, шкулта хăйсен ĕçне малалла тăсаççĕ. Шкулта ĕçлесе Елена Михайловна Канашри педучилищĕне вĕренме кайма ĕмĕтленнĕ, анчах та ĕмĕте пурнăçлайман – йывăрлăхсем чăрмав кÿнĕ.

Апла пулин те мал туртăмлă хĕр алă усса ларман: ял советĕнче секретарьте те, колхозра та ĕçленĕ, сутуçă ĕçне те алла илнĕ. Шăпах лавккара ĕçленĕ чух асăрхать те ăна Чуманкасси каччи Геннадий Иванов. «Ĕç вăхăтĕнчех качча илсе кайрĕ», – тесе шÿтлекелет Елена Михайловна çав кунсем çинчен каласа панă май. Вăрçă участникĕ Г. Иванов та хăйĕн пекех хастар пулнă: бригадирта, конюхра, почтальонта тăрăшнă, кладовщик пулса та ĕçленĕ. Çамрăк çемьере пĕрин хыççăн тепри пĕчĕк пепкесем кун çути кураççĕ– çичĕ ача пĕрин хыççăн тепри çуралать. Тепри вара çут тĕнчене каярах килет – Зина çемьере саккăрмĕш пулать.

Çакăн чухлĕ ачана пăхса çитĕнтерме питĕ йывăр, паллах. Чăтăмлă, çирĕп пулнă çав чăваш хĕрарăмĕ, темĕнле йывăрлăха та тÿснĕ. 26 çулта тăлăх çĕре качча килнĕ хĕрарăмăн ниçтан та пулăшу ыйтма май килмен. Тăван килĕнчи пурлăхне («среднякcем» пулнă) хăй вăхăтĕнче сутă туса туртса илнĕ. Качча кайма та ытларах аслă пиччĕшĕсен арăмĕсем – инкĕшĕсем – пулăшнă. Кунне-çĕрне пăхмасăр ĕçленĕ çемьене тăрантарас тесе. Ачасем ÿсеççĕ – пÿрт те тăварланать. 1960 çулта пÿрте çĕнетеççĕ, пысăклатаççĕ.

Ачисене пĕчĕкренех ĕçлеме, пĕр-пĕрне пулăшса пыма хăнăхтарса ÿстереççĕ Ивановсем. Аслисене, 7-8 çултисене, тырă вырма та илсе кайнă. Каярах аслăраххисем кĕтÿ пăхнă. Вĕсене шансах ларман, паллах, амăшĕ. Çак ĕçсене хăйĕн тĕслĕхĕпе явăçтарнă. Çав вăхăтра кĕçĕнреххисем 5 уйăхри сăпка ачине черетпе пăхнă. «Шкултан вара пĕр ачине те хăварман, кĕтÿ пăхма ман пата вĕсем уроксем хыççăн пыратчĕç», – ачисен вĕренĕвне мала хунине калать амăшĕ.

Хăй пурнăçĕнче тепĕр икĕ пÿрт те лартать Елена Михайловна. Пурнăç малаллах каять-çке. Темĕнĕн чухлех хура-шурне курнă вăл хăйĕн ĕмĕрĕнче. Çын мĕн чухлĕ йывăрлăх чăтма пултарать, Турри çавăн чухлĕ парать, теççĕ. Халĕ вара Елена Михайловнан савăнăçĕ те пысăк. Ку – малтанхи чăтăмлăхшăн парне. Патшалăх та сахал мар медаль-орденпа наградăланă ăна. Ачисем те кашни хăйĕн çемйине çавăрнă ĕнтĕ. Пурте хăйĕн пекех ĕçчен, тĕрлĕ ĕçсенче вăй хураççĕ. 16 мăнук унăн халĕ, 7 кĕçĕн мăнук. Пуянлăх мар-и çакă? Мăнукĕсемпе чăннипех те мухтанма май пур унăн. Вĕсенчен пĕри – пурте пĕлекен Вера Соколова. Çамрăк спортсменкăн тÿсĕмлĕхĕпе вăй-халĕ кукамăшĕннин пекех пулнă пулас...

«Чĕри тапать те, пурăнатăп-ха», – тет çак кунсенче 85 çул тултарнă кинемей. Мĕнех, малалла пурăнма та сывлăхĕ çирĕп пултăр унăн, йышлă ачи-пăчи савăнăç çеç парнелеччĕр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**


**Хĕрлĕ-шурă тынашка сутатпăр, апрелĕн 22-мĕшĕнче чуптарнă. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх.
Тел.: 8-902-665-04-08. Мăн Сĕнтĕр. Валя.**

**ИП Ершов А.В. делает на заказ банные печи любой формы, а также гаражные, уличные ворота. Продает угольники, швеллера, профильные трубы, трубы на забор и ворота. Новый завоз. Емкости из нержавеющей стали, прицепы на мотоблоки, сетка рабица. Доставка. Обращаться по тел.: 8-919-655-21-51 (Моргауши, бывший плодокомбинат). 3-5.**

**Уважаемые жители с. Моргауш и Моргаушского района!
МУ ФСК «Сывлăх» объявляет летнюю акцию:**
**- 1 июня, в связи с Днем защиты детей, вход в бассейн для детей и подростков до 18 лет бесплатный;**
**- на весь летний период для детей в количестве 3-х человек посещение бассейна осуществляется по цене 2-х разовых абонементов;**
**- в период с 1 июня по 31 августа действует акция «Именинник»: в день рождения, по предъявлении паспорта или свидетельства о рождении, посетитель может воспользоваться услугами ФСК за полцены от стоимости любого абонемента.**


## Прогноз погоды с 30 мая по 6 июня

www.yandex.ru

| сб 30 | вс 31 | пн 1 июня | вт 2 | ср 3 | чт 4 | пт 5 | сб 6 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| переменная облачность, небольшой дождь | ясно | переменная облачность | переменная облачность | переменная облачность | переменная облачность, небольшой дождь | переменная облачность | переменная облачность, дождь |
| +24 | +20 | +26 | +27 | +28 | +26 | +29 | +25 |
| +11 | +12 | +15 | +16 | +20 | +17 | +19 | +17 |


**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97. 4-8.**


Спорт хыпарĕсем

# Футболл вăййисене чĕнеççĕ

Июнĕн 1-мĕшĕнче районти ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учреждениcен тата ял тăрăхĕсен командисем хушшинче Муркаш район кубокне çĕнсе илессишĕн футболла выляссипе ăмăрту иртет. Командăсенче Муркаш район çыннисем çеç хутшăнма пултараççĕ. Вăйăсем тĕрлĕ зонăсенчи стадионсенче 19 сехетре пуçланаççĕ.

Июнĕн 5-мĕшĕнче «Акатуй» уявĕ ячĕпе иртекен вăйăсем пуçланаççĕ. Футбола кăмăллакансене стадионсене 10 сехет тĕлне йыхравлатпăр. Зонăри çĕнтерÿçĕсем хăйсем хушшинче мала тухассишĕн июнĕн 12-мĕшĕнче Лантăш вăрманĕн уçланкинче футболла вылĕç.

## Пĕлтерÿсем. Объявления


**Продается ячмень. Доставка. Тел.: 8-919-679-96-97. 2-3.**

✔ Производство на автоматической линии
✔ Многолетний опыт работы
✔ Гарантия 5 лет
Официальный представитель по Моргаушскому району
Любимые ОКНА
мобильный офис
КРУПНЕЙШИЙ ПРОИЗВОДИТЕЛЬ ПЛАСТИКОВЫХ ОКОН И ДВЕРЕЙ ПОВОЛЖЬЯ
КАЧЕСТВЕННЫЕ ОКНА МИР ОКОН И ДВЕРЕЙ
МЫ ГАРАНТИРУЕМ ВЫСОКОЕ КАЧЕСТВО ДОСТУПНЫЕ ЦЕНЫ
(8352) 44-80-26
8-937-380-99-59

**Июньте пĕрремĕш păруламалли хура тĕслĕ тынашки сутатăп. Ыйтса пĕлмелли тел.: 8-905-1999-384.**

**БЛОКИ керамзитобетонные: 20х20х40, 10х20х40, 12х20х40, пропаренные, вибропрессованные. От производителя. ЦЕМЕНТ М-400, КОЛЬЦА колодезные, ТРУБА Д60 (под столбы). Доставка.
Тел.: 8-927-848-78-16, 8-927-845-03-12. 9-9.**

**Продаю дом деревянный пятистенный в хорошем состоянии. Размер дома 7,5мх9,5м. Самовывоз. Цена договорная. Тел.: 8-905-344-27-53, 8-905-345-40-33.**

**МОЖНО КУПИТЬ: вагонку, двери, окна, пол, плинтус, наличник, перила, балясины, брусок, обрешетку (работаем на заказ). Все для бани.
Адрес: с. Моргауши, ул. Гагарина, 2, рядом с налоговой. Тел.: 8-905-345-41-67. Андрей. 8-12.**

**Продаем доски хвойные любых размеров, обрезные и необрезные. А также срубы любых размеров. Цены ниже рыночных. Тел.: 8-903-379-62-17, 8-927-847-23-38. 2-5.**


**Сообщаем вам, что согласно приказу МВД по Чувашии № 475 от 29 апреля 2009 года «Об организации работы «телефонов доверия» в органах внутренних дел по Чувашской Республике» на постоянной основе организована работа «телефонов доверия» при дежурной части МВД по Чувашии (тел.: 30-66-55), УГИБДД МВД по Чувашии (тел.: 62-50-30), УБЭП МВД по Чувашии (тел.: 30-68-03), инспекции по личному составу (тел.: 30-61-24). Исключено использование в качестве «телефона доверия» любой другой телефон органов и подразделений МВД по Чувашии. В связи с этим «телефон доверия» отдела внутренних дел по Моргаушскому району не используется.**


**Открылся новый магазин «Хозтовары»**



**ПРОДАЖА:**
- металлочерепицы
- гипсокартона
- профнастила
- сайдинга
- водосточной системы
- панели ПВХ
- утеплители ИЗОВЕР
- двери
- потолки подвесные, реечные
- и мн. другое.

**Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 25 (на территории «Агропромснаба»).
Тел.: 8-903-322-59-69, 8-927-864-30-03.**

**Грузоперевозки на автомашине ГАЗ до 5 тонн.
Тел.: 8-906-384-55-68.**

**Продаю керамзитобетонные блоки 20х20х40 см, гравмассу, песок с доставкой. Тел.: 8-902-327-66-95, 67-66-95. 1-5.**


**Инициативная группа собственников земельных долей на территории СХПК «Хлебороб» сообщает, что общее собрание участников долевой собственности по вопросу выдела земельных долей в натуре состоится 30 июня 2009 года в 14.00 часов в здании Тренькинского СДК Моргаушского района Чувашской Республики с поветской дня:**
**1. Местоположение части, находящейся в долевой собственности земельного участка, в границах которой в первоочередном порядке выделяются земельные участки в счет земельных долей СХПК «Хлебороб».**
**2. Местоположение части, находящейся в долевой собственности земельного участка, в границах которой находятся невостребованные земельные доли СХПК «Хлебороб».**

**Инициативная группа собственников земельных долей на территории СПК им. Мичурина сообщает, что общее собрание участников долевой собственности по вопросу выдела земельных долей в натуре состоится 30 июня 2009 года в 14.00 часов в здании Шатьмапосинского сельского Дома культуры Моргаушского района Чувашской Республики с поветской дня:**
**1. Местоположение части, находящейся в долевой собственности земельного участка, в границах которой в первоочередном порядке выделяются земельные участки в счет земельных долей СПК им. Мичурина.**
**2. Местоположение части, находящейся в долевой собственности земельного участка, в границах которой находятся невостребованные земельные доли СПК им. Мичурина.**

**Инициативная группа собственников земельных долей на территории СХПК им. К. Иванова сообщает, что общее собрание участников долевой собственности по вопросу выдела земельных долей в натуре состоится 30 июня 2009 года в 11.00 часов в здании Ятманкинского сельского Дома культуры Моргаушского района Чувашской Республики с поветской дня:**
**1. Местоположение части, находящейся в долевой собственности земельного участка, в границах которой в первоочередном порядке выделяются земельные участки в счет земельных долей СХПК им. К. Иванова.**
**2. Местоположение части, находящейся в долевой собственности земельного участка, в границах которой находятся невостребованные земельные доли СХПК им. К. Иванова.**


**Моргаушская районная газета «Çĕнтерÿ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

**За главного редактора В.Л. Шапошников.**
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1,5 усл. печатных листа.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 29.05.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3860.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.